К84.89(=Чув)
Т19
Ч-38560

Валентина Тарават



# Тавҫӑрулла Марине





Национальная библиотека ЧР
4-038560

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ
обозначенного

М т. 3 50 1990 г.г. 5000

К84,89(=Чув)
Т19
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Валентина Тарават

# Тавçăруллă Марине

Шÿтсемпе сăвăсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2004

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув)—6
Т 19

Художникĕ **СВЕТЛАНА КАНГИНА**

ч-38 560
Национальная библиотека Чувашской Республики
ПРОВЕРЕНО 20 10 13 СЕН 2017

**Валентина Тарават**
**Т 19** Тавçăруллă Марине: Шÿтсемпе сăвăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. — 32 с.

**«Тавçăруллă Марине» кĕнекене Валентина Тараватăн ачасем валли çырнă шÿчĕсемпе илĕртÿллĕ сăввисене кĕртнĕ. Тавçăруллă пĕчĕк Маринен кирек мĕнле ыйту çине те хăйĕн хуравĕ пур. Малтанах вĕсем айванла пек туйăнаççĕ пулин те, хăш-пĕр чух шалт тĕлĕнтерсе яраççĕ...**

**УДК 821.512.111**
**ББК 84 (2Рос=Чув)—6**

©Чăваш кĕнеке издательстви, 2004
© Валентина Тарават, 2004

**ISBN 5-7670-1327-6**

## АТТУ ЙЁРЕТ ВӐЛ

— Марине, пепкем, выҫрӑн пуль, ларса ҫи-ха хӑвӑртрах, — тет амӑшӗ урамра вӑрах выляса ҫӳренӗ хӗр ачине.

— Хам выҫман та, хырӑм питӗ хытӑ выҫнӑ манӑн. Анне, ӑна ҫитер-ха часрах. Атту йӗрет вӑл.

## ХӐРӐК ТУРАТӐН ӐШШИ ҪУК

Марине аппӑшӗ пӑхмасӑр сӑвӑ калама вӗренет.

— «Тухса кайрӗ вӑрмана хӑрӑк турат пуҫтарма», — вулать вӑл хытӑ сасӑпа.

— Эй, айванскер! — тарӑхать Марине. — Асанне каларӑш, хӑрӑк туратран мӗн ӑшши пултӑр.



# БАНАН ÇИЕС КИЛЕТ

Маринепе Анюк пытанмалла выляççĕ. Шырать-шырать Марине Анюка, ниепле те тупаймасть. Чăланти лар хыçĕнче ларса ыйăннă Анюк текех чăтаймарĕ:

— Эпĕ Африкăра! Хам таврăнмасăр та тупаймастăн эсĕ мана! — тесе кăшкăрчĕ.

Тавçăруллă Марине нумай шухăшласа тăмарĕ:

— Банан илсе кил-ха мана валли нумайрах. Эпĕ ăна пĕртте çисе курман, — терĕ.



# ИЛСЕ ПАРАТЬ

Марине салтак тӳми текен чечеке тытнӑ та тӑрӑшсах юмӑҫ пӑхать.

— Илсе парать. Илсе памасть. Илсе парать. Илсе памасть. Илсе парать... — чӗвӗлтетет вӑл хӑйӗн ҫепӗҫ чӗлхипе. — Илсе парать тухать. Тавҫӑруллӑ чечек. Манӑн асанне хӑй сӑмахне яланах тытнине пӗлет. Пенси укҫи илсенех хитре пукане туянса парать пуль-ха асанне.



# СĂВĂÇ МАРИНЕ

— Аннеçĕм, итле-ха ман сăвва, — тет хаваслă Марине.

Эпĕ аннене юрататăп.
Юрататăп эпĕ аннене.
Аннене юрататăп эпĕ,
Питĕ юрататăп ăна!

— Поэт иккен манăн чĕкеçĕм, — тĕлĕнет амăшĕ.

— «Поет» тени «юрлать» тени пулать-çке. Эпĕ вара сăвă калатăп, — ăнлантарать Марине.



# «ЫРАНЮК» ТЕСЕН ЛАЙĂХРАХ

Марине «Çил çунат» журнала пăхса ларать. «Ырвалюк» ятлă страницăна уçсан тĕлĕнсе калаçать:

— Ырвалюк, Ырвалюк... Валюкĕ хăй ырах та мар пуль. Ав пирĕн садике çӳрекен Анаткасри Валюк пĕртте ырă-скер мар. Яланах мана çивĕтрен туртать.

«Ыранюк» тесен лайăхрах пулмалла. Кӳршĕ Анюк мана нихăçан та кӳрентермест.



# АШКĂНЧĂК КУШАК

Марине хашкана ернĕ. Вăл иртенпех хăйсен кушакне шырать.

— Путсĕр! Ашкăнчăк! — ятлаçать хĕр ача.

— Кама çав териех кӳреннĕ эсĕ? — кăсăкланать тантăшĕ Анюк.

— Кушака. Ниепле те тупаймастăп. Килтен тухса тарнă пулас.

— Мĕн айăпа кĕчĕ тата кушаку?

— Асанне чăлхине палас айне пытарнă. Диван виткĕчне сĕтĕрсе антарнă. Аннен çăмхине салатса арпаштарнă. Çавăн пек харсăрланнăшăн кĕтесе тăрататăп ăна. Туйса илтĕр мана унта тăма епле япăххине.







## ÇИВĔЧ ЧĔЛХЕ

— Эх, çав Маюк чĕлхи! Ытла та çивĕч-çке! — те хурлать, те мухтать кӳршĕ хĕрарăмне асламăшĕ.

— Хăйрать пуль вăл ăна. Пирĕн килти çĕçĕсене леçсе пар Маюк аппана, хăйраса патăр. Атту тек аттене çĕçĕ мăка тесе ятлатăн.

## ПИÇМЕН ПАШАЛУ

— Чăн-чăн пиçмен пашалу, çавăн пек çăмăл сăвва та пăхмасăр калама вĕренеймен, — каласа парать такам çинчен Марине аппăшĕ амăшне.

Марине, калаçăва илтсе юлнăскер, чупса пычĕ те:

— Анне халь анчах кăмака хутса кăларчĕ. Пиçмен пулсан ларт пашалăвне хăвăртрах кăмакана, — терĕ.



# АГРОНОМ КУШАК

Марине кӳршӗсен кушакӗ час-часах пахчара уҫӑлса ҫӳренине асӑрхарӗ. Ваҫкӑ помидорсене сӑмсипе тӗксе пӑхать, хӑярсене астивет. Курӑксене те тиркемест, ҫырта-ҫырта пӑрахать. Хӗр ача пӳрте хашкаса чупса кӗчӗ те:

— Асанне! Анне! Маюк аппан кушакӗ агронома тухнӑ! — тесе пӗлтерчӗ пурте илтмелле. — Халӗ аптрамастпӑр ёнтӗ. Пахча ҫимӗҫ тухӑҫӗ ӳсетех кӑҫалтан.

## МАРИНЕ АШШӖНЕ ШЕЛЛЕТ

— Ай, чӗпӗтет! Ай, чӗпӗтет! — аллисене сӑтӑркалать хӗллехи урамранваскаса кӗнӗ ашшӗ.

— Кам чӗпӗтрӗ сана, атте?! Санӑн хӑйне хытӑрах чӗпӗтмеллеччӗ! — шеллет ашшӗне Марине.



# АНЮК САВӐНСАХ ПУҪТАРЧӖ

— Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест вӑл, — калаҫаҫҫӗ Марине амӑшӗпе асламӑшӗ тем пирки.

— Ӳкмест тетӗн-и? — хирӗҫлет урайӗнче пуканепе вылякан Марине. — Ӗнер ав вӑйлӑ ҫил пулчӗ те — пирӗн улмуҫҫи ҫинчи пан улмисем кӳршӗсен пахчине ҫитиех ӳкрӗҫ. Анюк савӑнсах пуҫтарчӗ вӗсене.

# ПЫЛАК ЫЙХӐ



— Ыйхӑран тутли тата мӗнех пур-ши? — пуплешет Марине ашшӗ ыйхинчен вӑранса.

— Аттеҫӗм, чӑннипех питӗ пылак-и вара вӑл? Мана валли те кӑштах хӑвар-ха эппин, — тилмӗрсе пӑхать Марине.

# МАРИНЕ ВĔРЕНТЕТ

— Пĕтрĕ пуç! Пĕтрĕ пуç! — аллисемпе хăлаçланать урамран васкаса кĕнĕ Марине асламăшĕ.

— Анне, мĕн пулчĕ? Мĕн пирки çав териех кулянатăн? — шикленсе ыйтать ывăлĕ.

— Ара, çӳлтен мăйăр пысăкăш пăр çăвать те пĕтĕм пахча çимĕçе, тыр-пула пĕтерет-çке.

Марине, çакна илтнĕскер, асламăшне вĕрентет:

— «Пĕтрĕ пуç» тесе каламалла мар. Пуçу чиперех-çке. Пĕтрĕ пахча çимĕç, пĕтрĕ тыр-пул темелле.



# ÇАВ ПĂТТА ВАЛЮК ÇИТĔР

Марине, тутлă ыйхăран вăраннăскер, амăшне шыраса кухньăна кĕрет.

— Аннеçĕм, мĕн пĕçерсе çитересшĕн эсĕ мана паян? — ачашшăн тĕршĕнет вăл кухньăра тăрмашакан амăшĕ çумне.

— Маннă кĕрпинчен пăтă пĕçерсе парас тетĕп, — савса çупăрлать ăна амăшĕ.

— Çав пăтта Валюк çитĕр.

— Ма тата?

— Маннă кĕрпинчен пĕçернĕ пăтта çисен манакан пулатăн.





# КĂНТĂР ÇĔРШЫВĔНЧЕ

Ылтăн кĕркунне. Пахчара мĕнле кăна çимĕç пиçсе çитмен-ши! Пурне те сăнама, асăрхама юрататакан Марине помидор йăранĕсем хушшинче çӳрет.

— Асанне! Асанне! Кил-ха кунта! — чĕнчĕ вăл юратнă асламăшне. — Пĕр каç хушшинче пирĕн пата кăнтăр çĕршывĕ куçса килнĕ. Кур-ха! Акă помидор тĕмĕ çинче лимон ӳсет, — тĕлĕнсе аллипе тĕллесе кăтартать Марине. — Сап-сарăскер, пы-ысăкскер. Кур, кур! Ак юнашар тĕмĕ çинче — тĕсĕпе те, калăпăшĕпе те — апельсин.

— Çавна та пĕлместĕн, — юнашар пырса тăчĕ Анюк. — Нимле кăнтăр та куçса килмен. Çавăн тĕслĕ помидорсем пулаççĕ. Пирĕн пахчара тулли-ех вĕсем. Çĕрле сирĕн пата тарса килнĕ.



# Марихепе тусёсем



## КУÇКĔСКИРЕН ПĂХНИ

Куçкĕскирен пăхса тăратăп:
Тирпейсĕр ачана куратăп.
Йăлт тăрмаланнă çӳçĕ-пуçĕ,
Йăлтах лапраллă пичĕ-куçĕ.
Хăй лӳчĕркенчĕк кĕпепе.
Ăна витлерĕм чĕлхепе.
Витлерĕ хирĕç, шăпăрлан!
Юнарăм: «Эп камне ан ман!»
Çĕклерĕ вăл та чышкине,
Çиллессĕн пăхрĕ ман çине.
Аннеçĕм пӳлĕме кĕрет.
— Маттур! Хăвна вăрçатăн, —
тет.

## ӲСЕССИ КИЛЕТ

Ӳсесси килет Ульукăн.
Ĕçлемешкĕн вăхăт çук ун.
Кунĕпех чăмлать Ульук:
Канихвет, халва, урюк,
Мармелад, хуплу, зефир,
Çăмарта, варени, сыр...

Вăл çиет, çиет, çиет —
Урлăшĕ кăна ӳсет.



# ШКУЛА КАЯС КИЛЕТ

Пит телейлĕ-çке туссем:
Пурте çакнă портфельсем.
Пысăк хуйхă манăн çех —
Каймалла-çке садикех.

Пысăк эпĕ Кольăран,
Вăйлă эпĕ Тольăран.
Вĕсенчен аван вулатăп,
Вĕсенчен аван шутлатăп.
Илĕр-ха шкула мана та.



# ТĂМАНА

Каçарас-ши Юмана?
«Тăмана», — тет вăл мана.
Те кулас, те кӳренес?
Тен, маклашкă «парнелес»?

— Эсĕ хăв та тăмана, —
Ăнлантартăм эп ăна. —
Аннене эс итлеместĕн,
Вăхăтра киле кĕместĕн.
Вăй вылясшăн çĕрĕпе,
Çывăрасшăн кунĕпе.

Ч-38560
Национальная библиотека
Чувашской
Республики



# УЛАХ

Анне кайнă пасара.
Атте кайнă сунара.
Йăмăкпа пире — улах.
Тăрмашатпăр хамăрах.

— Пĕçерес улах пăтти, —
Тет ман йăмăк Ултутти.
Вăл кĕрпе илсе кĕрет.
Лăкăр-лăкăр! шыв вĕрет.

Кĕрпине ярас виçсе —
Сарăлать кĕрпе пиçсен.

Тăрăшатпăр йăмăкпа —
Пăтрататпăр кашăкпа.
Ак хушатпăр услам çу.
Питĕ тутлă. Чăтăм çук.

Пиçрĕ пăтă пăртакран.
Ак ларатпăр апата.
Ху пĕçернĕ апатран
Тутли çук пуль, тупата.



# МАТТУРККА ЭП, МАТТУРККА

Пĕчĕкскер тесе ан калăр,
Парăр хăвăртрах пукан.
Акă, хăвăрах куратăр,
Аннепе эп халь пĕр тан.

Мăранкка тесе ан калăр,
Мăранкка нихçан пулман.
Хăвăртрах яшка антарăр —
Кам çисе ярать малтан?

Итлемест тесе ан ятлăр,
Курăр — радио кĕрлет.
Телевизорне те ярăр,
Иккĕшне итлеп пĕрле.

— Маттуркка-çке эсĕ, — тейĕр. —
Пысăккă-çке, пысăккă.
Тутлине кăна çитерĕр,
Сиктерсемĕр утьăкка.





## ЭП УНРАН ТА ЧЕЕРЕХ

Ах, чее-çке вĕлтĕрен!
Çатăр-р! çыртрĕ пӳрнерен.
Таттарасшăн мар хăйне,
Кăтартать хаярлăхне.

Эп унран та чеерех,
Улталарăм пурпĕрех —
Алсишпе тататăп çатăрт!
Чĕпĕтеймĕ урăх çатăр-р!



## ТУТЛĂ МАР

Пиçмен чие çупкамне
Татнă пĕчĕк Урине.
Мăч хупать кăвак куçне.
Тĕлĕнсе суллать пуçне:
— Ах, аннеçĕм, тутлă мар!
Вырăннех çакса хурар.



# ВĂЙĂ

Ăшша пиçрĕм паян иртенпе:
Эп вылятăп пĕччен пӳскепе.
Ерçеймеççĕ ниçтан тусăмсем:
Павăл тантăш пăхать чĕпĕсем,
Кĕтерук йăпатать шăллĕне,
Микула пулăшать амăшне,
Пĕчĕк йăмăк ĕçлет пахчара.
Камсемпе ман выляс-ши вара?

Кантарас пуль кăштах пӳскене
Пулăшас пуль кĕрсе аттене.





## ПĔЧĔКÇĔ ЁНЕ

Кукамайпа таврăнатпăр пасартан:
«Ёне» илтĕмĕр, сĕт пулĕ паянтан.
— Ме-ке-кек! —
тесе силлет вăл сухалне.
Качака тесе чĕнеççĕ «ёнене».

Пĕлсе сутнă ёнине пире пасар —
Пĕчĕкскере
нумай утă кирлĕ мар.

## УРХАМАХ

Парнелерĕç урхамах.
Лартăм хăпарса хамах.
Çапрăм пушăпа ăна:
— Катаччи чуптар мана!

Урхамахăм ăнланмарĕ,
Вырăнтан та хускалмарĕ.
Пиччем кулчĕ:
— Пушă мар,
Чуптăр тесен сĕлĕ пар.



## ÇЁНУК

Йăл! та йăл! кулать Çинук,
Телейли унран халь çук:
Çĕнĕ кĕпе, çĕн саппун,
Çĕнĕ сумка та пур ун.
Йăлтăр-ялтăр пушмаксем,
Тетрадьсем, кĕнекесем...

Ма-ши пухнă çак мула?! —
Каймалла кĕçех шкула.
Витлешетĕп: — Эй, Çинук!
Çинук мар эс халь — Çĕнук.





## ТĂРĂШАТĂП

Çурăм тăрăшса кĕпе —
Пулса тăтăм йĕп-йĕпе.
Урай тăрăх шыв юхать.
Типĕтсех тинке тухать.

## ĂМĂРТУ

Çатма пек яка-çке çулĕ.
Чаплă приз пĕр манăн пулĕ.
Манăн спорт костюмĕ капăр,
Вĕр çĕнех кроссовкăсем.

Вăй виçетпĕр, ăмăртатпăр.
Ваççан — кивĕ кедăсем.
Майкин тĕсĕ-пусĕ çук.
Тухас çук мала Ваççук!

Малалла тăк — малалла!
Вĕçтеретпĕр çулпала.
Ӳт-пӳ тăрăх тар юхать,
Урана пушмак хырать.

Часах ертĕм хашкана,
Çитеймерĕм Ваççана.







## УРОКРА

Тĕк ларма пачах май çук:
Çанăран туртать Куçук,
Çурăмран чышать Çтаппан,
Алăран тытать Йăван.

Ручка кирлĕ. Кăранташ...
Епле памăн-ха?! Юлташ.
Унталла та кунталла —
Кăлтăрмач пек пулмалла.

Ак учитель асăрхать —
Ман пата вăл çывхарать.
— Микула, ан чĕпĕт, — тетĕп,
Хам шăши пек шикленетĕп.





## ЎСЕТĔП

Шывĕ хатĕр каткара,
Сĕткен курăк — сырăшра.
Хăвăртрах вĕçлес ĕçе:
Килмелле кĕтӳ кĕçех.

Уçса хутăм алăка,
Алла тытрăм мăн курка.
Васкаса килет ĕне,
Витрепе кĕтет анне.

Ăшă сĕт часах ĕçетĕп:
Ир валли пĕр шит ӳсетĕп.

## АН ЎРКЕН

Ĕнтĕркенĕ йыт çури.
— Хам-м! Шелле-ха,
Кĕркури!
Хăвăртрах кил ман пата,
Ан ӳркенччĕ, тупата.

Хам! Хам! Хам!
Эп шăнатăп, ăнлансам!
Туса пар мана ӳпле,
Сивĕ хĕл кĕç çитмелле.



# ИНКЕК

Чăвашла пĕлмест Кампур.
Вырăса вăл тухнă. Кур!
Пĕр эрне-çке хулара
Кампур пулнă хăнара.

— Илсе кил, — теп, —
çĕлĕке!
Йăтса килчĕ кĕрĕке.
Йăлт аташнă. Ах, инкек!
Хулана ямастăп тек.

Пулса тухрĕ кулăшла —
Калаçатпăр вырăсла.





## КУКАМАЙĂМ ХĂНАЛАТЬ

Хĕрсех ташлать хур аçи,
Такмак калать кукаçи:
— Тăпăр-тăпăр-тăпăрти,
Симĕсленчĕ анкарти.
Тек çӳреймĕн пахчара,
Ĕçсе çи эс çырмара.

Кукаçиййĕм хăвалать,
Кукамайăм хăналать —
Сапать тулă та ыраш:
— Килтен кайсан — ан аташ.



## ХУ ӲСТЕР

Кунĕпех салху куян:
Купăста çимен паян.
Кишĕр те лекмен ăна.
Пулайман куян хăна.

Хураçка — пахча хуçи:
— Хăр-р-р! — тет, —
ху ӳстер те çи!

# КУЯН

Ёçлерĕм кĕçĕр çĕрĕпех —
Пĕветрĕм сăрă кĕрĕке.
Курсам: вăл шурă юр пекех.

Тапса сикетĕп пахчана,
Асăрхас çук никам çакна.

Ах, улмуççи! Ах, чун уççи!
Епле саватăп эп ăна!



## ÇУРКУННЕ

Шарт! та шарт! пĕррехинче
Илтĕнет çырма енчен.
Мĕн сасси ку? Ах анчах!
Вирхĕнет ача-пăча.

«Ăшалать» хĕвел пăра
Шарт! та шарт! çура-çура.

Çуркунне ку! Çуркунне!
Ыйхăран çĕр вăранать.
Петĕр те кимми çине
Çилкĕçсем лартмаваскать.



## САР ХĔВЕЛĔМ

Пайăркусене савса салатрăн,
Канлĕ ыйхăран пире вăратрăн.
Савăк кашни çыншăн тĕлпулу.
Эмелтен те сиплĕрех куллу.

Сар хĕвелĕм, еплерех эс ырă!
Пуç тайса çĕкленчĕ ылтăн тыра,
Пахча çимĕç тулчĕ сим пылпа...
Тус пуласчĕ ман ялан санпа.



# КĔСКЕ ЫЙХĂЛЛĂ КУШАК

Кĕске ыйхăллă кушак
Ир-ирех ĕçлет: шак-шак...
Чӳлмеке ӳпне вырттарнă,
Хăймине унтан пуçтарнă,
Тарăн тирĕкри аша
Çисе янă, апăрша.

Ларнă та вăл сак çине
Тăрăшсах çăвать питне.
— Măр-măр! Петюк, вăран!
Пит нумай эс çывăран.
Пĕл: ир тăракан валли
Кĕреке ялан тулли.



# ТУПМАЛЛИ

**Тавҫӑруллӑ Марине**

Атту йӗрет вӑл . . . . . . . 3
Хӑрӑк туратӑн ӑшши ҫук . . . . . . . . —
Банан ҫиес килет . . . . . 4
Илсе парать . . . . . . . . 5
Сӑвӑҫ Марине . . . . . . 6
«Ыранюк» тесен лайӑххах 7
Ашкӑнчӑк кушак . . . . . 8
Ҫивӗч чӗлхе . . . . . . . . 9
Пиҫмен пашалу . . . . . —
Агроном кушак . . . . . . 10
Марине ашшӗне шеллет . —
Анюк савӑнсах пуҫтарчӗ 11
Пылак ыйхӑ . . . . . . . . —
Марине вӗрентет . . . . . 12
Ҫав пӑтта Валюк ҫитӗр . 13
Кӑнтӑр ҫӗршывӗнче . . . 14

**Маринепе тусӗсем**

Куҫкӗскирен пӑхни . . . 16
Ӳсесси килет . . . . . . . . —
Шкула каяс килет . . . . 17
Тӑмана . . . . . . . . . . . —
Улах . . . . . . . . . . . . 18
Маттуркка эп, маттуркка 19
Эп унран та чеерех . . . 20
Тутлӑ мар . . . . . . . . . —
Вӑйӑ . . . . . . . . . . . . 21
Пӗчӗкҫӗ ӗне . . . . . . . 22
Урхамах . . . . . . . . . . —
Ҫӗнук . . . . . . . . . . . 23
Тӑрӑшатӑп . . . . . . . . —
Ӑмӑрту . . . . . . . . . . . 24
Урокра . . . . . . . . . . . 25
Ӳсетӗп . . . . . . . . . . . 26
Ан ӳркен . . . . . . . . . . —
Инкек . . . . . . . . . . . 27
Кукамайӑм хӑналать . . 28
Ху ӳстер . . . . . . . . . . —
Куян . . . . . . . . . . . . 29
Сар хӗвелӗм . . . . . . . . 30
Ҫуркунне . . . . . . . . . —
Кӗске ыйхӑллӑ кушак . . 31



Литературно-художественное издание

*Для детей младшего школьного возраста*

**Валентина Тарават**
**(Игнатьева Валентина Николаевна)**

**ТАВҪӐРУЛЛӐ МАРИНЕ**

**ОСТРОУМНАЯ МАРИНЕ**

**Шутки и стихи**

*На чувашском языке*

Художник *С.А. Кангина*
Редактор *О.Л. Васильева*
Художественно-технический редактор *А.В. Семенова*
Корректор *А.Г. Владимирова*
Компьютерная верстка *А.В. Леонтьева*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003
Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 09.07.04.
Формат 84x108 $^1/_{16}$. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Усл.печ. л. 3,36.
Учетно-изд. л. 3,33. Тираж 2000 экз. Заказ № К-4573. Изд. № 19.

ГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12б.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. И.Яковлева, 13.